7-меш №. Июљ. 1935 ç.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

# КАПКĂН




— Ăçтала чупат̆ Мĕтри?
— Ашшĕ вилнĕ. Виличчен страхламан та, хаљ страхлама пулмĕ-ши тесе района чупат̆.

Ç. Шăпчăк.

# Етем йатне илнĕ етем

— Сывă-и, лайăх çӳретĕри, мĕнле пурăнатăр?— ал пырса патăм йалтан хулана килнĕ йулташа курса.

— О-о-о, сывă, сывă! Лайăх çӳретпĕр. Питĕ те аван пурăнатпăр.

— Çемйесем мĕнле çӳреççĕ?

— Аван çӳреççĕ. Пурте сывах-ха. Пĕр... карчăк суккăр пулса ларчĕ те, тата... ача... çăвĕпех çăпансемпе асапланать. Е-е, лайăх çӳретпĕр. Пурте сывах-ха.

— Пульницана илсе кайса пăхман-и?

— Пульницана... Илсе кайса пăхаймарăм-ха. Çав. Йерçӳ çук вĕт, хăвах пĕлетĕн. Кунĕн-çĕрĕн ĕçре вĕт. Е-е, çапла, сывах çӳретпĕр-ха.

— Арăму та, ачу та ĕçленĕ пулсан тата та лайăхчĕ те ĕнтĕ?..

— Е-е, çаплаччĕ, çаплаччĕ. Хамăр та çаплах шутлатпăр та ĕнтĕ ăна. Ара, мĕн тăвас тетĕн? Йерçӳ çук вĕт, хăвах пĕлетĕн. Кунĕн-çĕрĕн ĕçре. Ларса та канмала мар.

— Çав ĕнтĕ, çав. Чылай ĕçкунĕсем ĕçлесе илтĕн пуль ĕнтĕ кăçал?

— Чылай-йи качки... Нумайах ĕçлеймен вара еп кăçал. Йерçӳ çук, хăвах пĕлетĕн. Ларса та канмала мар.

— Апла пулсан, пушшех нумай ĕçкунĕсем турăн пуль ĕнтĕ. Ĕçкунĕсем вĕсем ларса канмасăрах ĕçлесен пушшех те нумай пулаççĕ вĕт.

— Çапли... çапла та... Епĕ ĕçлесех кайман кăçал. Йерçӳ çук, хăвах пĕлетĕн. Ларса канма та йерçӳ çук. Хамăр çумри Çтапансем ĕçлекелерĕç. Иккĕн икĕ çĕр кунтан иртерне тетчĕç. Пайан та иккĕшĕ те ирех тухса кайрĕç вырмана. Йерçӳлĕ çынсем вĕт, хăвах пĕлетĕн. Колхоз ĕçĕнчен пуçне урăх нимĕн те тумаççĕ. Кашни кун çавăнтах чавалаççĕ. Мĕн пур ĕçĕ çавăнта вĕт вĕсен.

— Есĕ те ĕçлетĕн вĕт-ха. Ларса канма та йерçӳ çук тетĕн. Апла есĕ те чылай ĕçленĕ пулас пулать ĕнтĕ?

— Çук. Ĕçлесех кайаймарăм епĕ кăçал. Пĕркунче икĕ кун тухнăччĕ ыраш вырма. Урăх тухаймарăм. Так... нимĕн тума та йерçӳ çук. Кăçалхи пек канăçсăр çул курман вара епĕ. Ыгла та пĕрре те йерçмеле мар. Тĕлĕнсе кайнă, ачам. Нихăçта кайса кĕмеле мар. Вĕтелентереççĕ кăна. Ту—пушăт касма хăвалаççĕ, ту—çул ĕçне йараççĕ, ту—тислĕк тăкма хушаççĕ, ту—çĕртме тума пырса калаççĕ, ту—çум çумлама хăвалаççĕ, ту—çаран çулма, ту—тырă вырма, ту... Ну, мĕн калаçмали пур унта. Простă, ĕнсе хыçма ирĕк памаççĕ. Нимĕн тума та йерçмеле мар. Иртнĕ çулсем арăм ĕçленĕччĕ пăртак. Кăçал вăл та пулин тухаймарĕ. Шалтах аптраса çитрĕм ĕнтĕ кăçал. Нимĕн тума та пĕлместĕп. Хăть çурăлса кай çавăнтах.

— Апла сирĕн колхозра кăçал ĕç питĕ те нумай иккен. Ĕçсĕр пурăнма çук. Темĕн чухлĕ ĕçкунĕ тума пулать.

— Ĕçлесен... пулать. Анчах ĕçлеме йерçӳ памаççĕ. Кунĕн-çĕрĕн ĕç тума хушаççĕ. Ăçтан ĕçлесе çитерен? Нимĕн те тумала мар. Так çаплипех иртсе кайать.

— Пушăт касма кайнă-и есĕ?

— Çук. Йерçӳ çук ара...

— Çул ĕçне кайнă-и?

— Çук, йерçӳ çук, тетĕпçке ара...

— Тислĕк тăкма кайнă-и?

— Пĕр кун та тухман. Ара, каккуй тислĕк тăкма кайма, ларса канма йерĕçмен.

— Çĕртме тума?

— Çук.

— Çум çумлама?

— Каккуй унта...

— Çаран çулма та кайман-и?

— Çук, ара. Чеснă слово: йерçӳ çук.

— Тырă вырма тата?

— Пĕркунче ыраш вырма икĕ кун кайнăччĕ. Урăх тухман. Çуртри вырма пĕр кун та тухаймарăм. Нийепле те йерĕçмеле мар. Аптраса çитрĕм ĕнтĕ. Ларса канма та йерçӳ çук. Туршăн та... ĕçпех вилес пулать ара.

— Итле-ха, Михал Иванч! Ара есĕ çу кунче нимĕн ĕçлемесĕр иртерсе йанă вĕт. Хĕле кĕрсен чăнах та выçă лармала килет вĕт санăн?

— Хам та çавна шутлатăп çав. Простă, тĕлĕнсе кайнă ĕнтĕ. Хĕле кĕрсен темĕнле пурăнас ĕнтĕ.

— Ĕçлес пулать, Михал Иванч, çиме пулать. Ĕçлемесĕр ăçтан пурăнма май килет. Хăвах шухăшласа пăх, Михал Иванч!

— Темĕн тĕрлĕ те шухăшласа пăхнă ĕнтĕ. Аптăраса çитрĕм. Таçта кайса кĕрес. Ларса канма та йерçӳ çук. Пĕрмай ĕç патне каймала. Нимĕн тума та йерçмеле мар.

— Ху йерçӳ çук, тетĕн. Пайан мĕн туса çӳретĕн вара есĕ кунта—хулара?

— Вăт, калаçа паратăн ара. Ларса канма йерçӳ çук вĕт. Пĕрмай ĕç патне каймала, тенине илтместĕн-им? Вăт, тухса уттаратăн вара—куçăм ан куртăр, тесе. Вăт, çӳретĕн вара çакăн пек йанкăлтатса ирĕксĕр. Сан пĕр тенкĕ укça çук пуль?—хăйусăр ыйтрĕ Михал Иванч.

— Çук. Васкатăп. Сывă пул-ха, Михал Иванч,—парас укçана памарăм çиллентсе.

— Е-е, сывă пул! Çĕрпӳ пасарне уттарас-ха кирек камăн та. Ара, ларса канма йерçӳ çук. Пĕрмай ĕç патне хăвалаççĕ колхозра,—вăрахăн алă парса уйăрăлчĕ Михал Иванч.

Пыр та пупле—пулать, вĕт, етем йатне илнĕ етем!



# Пĕччен кичем

Чаканарти (Йетĕрне р.) вулав çурчĕнче ни хаçат-журнал тавраш, ни кирлĕ кĕнекесем çук. Çавăнпа вулав çуртне колхозниксемпе йединоличниксем çӳреми пулнă.

*Енгер ӳкерне.*




— Авланас пулĕ тетĕп, пичче!
— Ма вара?
— Кичем никам çӳремен çуртра пĕччен лармa. Авлансан ун пек пулмĕ, тетĕп.

## Тăккаланчăк нумай хăваракан етем

*В. Филиппăс ӳкерчĕкĕ*




— Мана кайăксем йуратаççĕ. Уйра та, йĕтем çинче те ман пуç çинче, еп ĕçленĕ хушăра, кайăк-кĕшĕксем вĕçсе йавăнса çӳреççĕ.

*Иван Мучи.*

# Иккĕшĕн икĕ чĕлхе пулнă

Пӳрте пĕр лутрарах, 60 таврашне çитнĕ, лăпчăкрах сăмсалă чăваш кĕрсе тăрать. Йероплан кӳлепи туса ларакан ача хĕвел ăшшинче çӳренипе хура сăн çапнă питне-куçне килнĕ çын йеннеле туса:

— Мĕн тетĕн есĕ? „Тура пулăштăр" терĕн мари-ха? Апла мана ан кала. Сĕм пĕчĕкренпех епĕ турра ĕненместĕп,—терĕ.

Килнĕ çын: манпа калаçакан шуйттан мар-ши?—тесе тăкки-такки сăхсăхса илчĕ.

Пăхать—кĕтесре иккон та çук.

Унтан, кăштах ларсан, хăй умĕнче шуйттан мар, çывăх çын сăнлă ача ларнине аса илсен, хăйусăртарахăн ыйтать унран:

— Сирĕн кĕтесре турăшсем те çук. Пурне те вакласа тăкрĕç-и вара вĕсем? Пĕрине те хăвармарĕç-и? Нимĕç пупĕсем: камăн кĕтесре турăш çакăнса тăрать, ăна большевиксем тĕрмене кайса хупаççĕ, хуçи тем чухлĕ тархасласа ыйтсассăн та, пӳртри турăсене вакласа вĕсенчен турпас туса хăвараççĕ,—теççĕ. Вĕсем калани тĕрĕс пулнă. Турăш вырăнне халĕ кама пуççапатăр?—терĕ кăвак куçĕсене чармакласа йарса ача çинеле пăхса.

— Пĕрне те хăвармарĕç!—терĕ ача татăклăн илтĕнекен сасăпа.

— Пуртăпах вакласа тăкрĕç-и апла?

— Пуртăпа пулмасăр. Атте пуртă илчĕ те, икконсене вакласа турпас туса пачĕ. Анне турпасне хуран айне хурса çунтарчĕ.

— Кам хушнипе апла турĕ?

— Никам хушнипе те мар. Хăй ирĕкĕпе. Мĕне кирлĕ пире тĕн сĕрĕмĕ саракан икконсем. Аттеанне ун йышши хăма татăкĕсене ĕненме пăрахни нумай çул иртрĕ ĕнтĕ.

— Микул турăсенчен, тур амăшĕсенчен хуран айне хумали турпас пулса тăчи? Суйатăн пулĕ, турăш тени вăл вутра та çунмасть, шывра та путмасть,—ĕненмесĕр пуçне силлесе илчĕ.

— Йăвăç йапала шывра путмасан та, вутра çунать çав!—терĕ ача каллех йероплан кӳлепи тума тытăнса.

Пӳртре шăплăх. Килнĕ çын куçĕсене мăч-мăч выльатса ача çине пăхса ларать. Пуçĕнче Германири рабочисем, хресченсем Совет союзĕ çинчен чăн сăмах каланисем тĕтревлĕн аса килнĕ пек пулса выльанса тăраççĕ те, анчах сасартăк, çунакан хăрăм пек, сӳнеççĕ лараççĕ. Ача çĕççине пăрахать те, тĕпеле чупса кайса, çăкăр касса, çăкри çине çу сĕрсе, çиме тытăнать.

— Çу çинĕшĕн сана анну килсен вăрçать-ха!—тет ачана старик пӳрнипе йунаса.

— Ма вăрçать?—тет ача çиме пăрахса.

— Ара хăвăрăн ĕне çукки паллах. Есĕ çăкăр татăкĕ çине ĕне çу сĕрсе çиетĕн.

— Пирĕн ма ĕне çук? Пурçке! Пирĕн колхозра ĕнесĕр хуçалăх пĕрре те тупаймăн.

Старик çăварне карсах пăрахать.

— Ени пулсан çуне пасарта сутса укçа тăвас пулать. Куланай мĕнпе тӳлĕн?

— Куланай! Мĕнле „куланай" тетĕн есĕ?

— Хырçă еппин. Куланай тӳлеме укçа тупасшăнах аçу-аннӳ пуйан патĕнче ĕçлесе иртереççĕ пулĕ-ха. Есĕ ăна пĕлместĕн.

— Кулак патĕнче-и? Кулака ак мĕн туса хутăмăр епĕр?—ача ик пуç пӳрни чĕрни хушшинче кăпшанка вĕлернĕ пек туса кăтартрĕ.

— „Кулак" чăвашла чышкă?! Чышка ăçтан ун пек тума пултаратăн?

— Кулака пĕтертĕмĕр. Халĕ пирĕн колхоз. Ӳркенмесессĕн ĕçкуҥ темчул та туса илме пултаратăн,—терĕ ача чӳрече витĕр ачасем лашала выльаса кайнине пăхса тăнă хушăра.

Старикăн куç харши çунаттисем сарăлса карĕç. Йулашкинчен кулам пекки туса, сассине ачашшăн кăларса каларĕ:

— Çармăçла калаçма пĕлместĕп епĕ. Темĕскер „колхоз" терĕн, „ĕçкунĕ" терĕн. Мĕн тени пулать вăл чăвашла?

Ача лах-лах-лах кулса йарать, вар-хырăмне тытса:

— Ăçта çăва шăтăкĕнче пурăннă çын вара есĕ?—тет старик çине пăхмасăр.

Килнĕ çын именнĕ пек пулса, кăвак сухалĕ витĕр сарă шăлĕсене йĕрсе:

— Ес мана палламастăн. Мучу пулатăп епĕ. Германҥ вăрçинче çухалнă мучу. Çухаласса, тĕрĕссипе каласан, çухалман епĕ. Унтах пурăнса киле пĕр çыру та йаман. Тăлăх, упăшки вăрçăра вилнĕ арăм панче киле кĕрсе пурăнтăм. Ачам-пăчамсем пулмарĕç. Пурăнăçĕ йăвăрланса çитрĕ. Халĕ унти пурăнăçа ылханса кунта килтĕм,—тет.

— Колхоза кĕмерĕн-и мĕн? Ĕçкунĕсем тумарăн-и мĕн? Йединоличник-и мĕн? Кулак хыççăн кайса...

— Куçăхнă пулмала есĕ, ачам, аташма пуçланă. Мĕн ăнланмала мар сăмахсем шухăшласа кăларса мана каласа ларатăн. Куç чĕлхи суртарас пулать сана.

— Куç чĕлхи суртарас? Мĕнле?—çутă-кăвак куçĕсемпе пăхса, старик патнех пырса тăчĕ ача. Унтан чĕлхине тăсса, чĕлхи çийĕн тфу! тесе сурса йарса, старикрен ыйтать:

— Чĕлхе çапла сураççĕ-и?—тет.

— Апла-и ара!—тет старик кулкаласа. Асамçăсем саватă-сапа ăшне чĕлхе сурса ĕçтерни çинчен каласа паратăп сана. Чĕлхе сурнине епĕр вара ĕçеттĕмĕр.

— Чĕлхене мĕнле ĕçме пулать?

— Чĕлхене мар... ĕçмели йапала мар вăл чĕлхе. Саватă-сапа ăшне сурса панине ĕçеттĕмĕр. Сăмахран, куç чĕлхине çапла калатчĕç: „Пĕсмеле! Тур çырлах! Атăл йăлăмĕнчен, Сăр йăлăмĕнчен Ашапатман старик килет; вăл тĕтерет, вăл тапса кăларать. Ыр вут ами вĕрсе кăларать, шăтăклă кăмпине тĕтĕрсе кăларать" Ку куç чĕлхи пулать. Урăх...—

— Куç чĕлхе?! Куçăн чĕлхе пулать-и?

— Есĕ мана ăнланас çук. Пăрахар кун çинчен каласма. Аçупа аннӳ хальхи саманара мĕнле пурăнни çинчен каласа пар-ха. Пит пĕлессĕм килет вĕсен пурăнăçĕ çинчен.

— Мĕн каламали пур. Аван пурăнаççĕ вĕсем. Ĕнер митингăра унăн йатне те темиçе хут та

ксăнса калаçрĕç. Ударник, чи малта пыракан ударник теççĕ ăна.

— Митингăра!—тесе старик хутланса ларса, аллисене çарсах йачĕ.

— Ĕнер Чăваш Автономи йачĕпе пысăк митинг пулчĕ.

— Митинга пухăннă çынсене шандарсем пĕтĕмпех хупăрласа илсе хĕнесе тăкрĕç пулĕ. Митинг туса иртерме памарĕç пулĕ?

— Мĕнле шантарсем? Илтмен епĕ ун пек сăмаха.

— Çитĕнсе çитсен илтĕн?—терĕ старик хуйхăрса.

— Ма хупăрласа илеççĕ-ха вĕсем митингăри çынсене?

— Митингăри çынсене-и? Хăшне—персе пăрахаççĕ, хăшне—тĕрмене хупаççĕ, хăшне пaçăр калана пек хĕнесе тăкаççĕ. Германире кирек хăçан та çавăн пек. Митингсем тума ирĕк çук унта пирĕн.

Ашшĕпе амăшĕ колхозран ĕçлесе тавăрначченех вунă çулхи ачапа 60 çулхи „ача“ пĕр-пĕрипе сăмах вакласа ларaççĕ. Мĕншĕн кашни халапрах пĕрин сăмахне тепри ăнланмасăр йулмала пулнине ача ăнланмаст.

Йулашкинчен, ашшĕсем ăнлантарса панă хыççăн килнĕ старик пурнăçран 20 çула йахăн кайра ларнине сиссессĕн, ача çепĕç, пĕчĕкçĕ аллине старикăн хыткан çурăмĕ çине хурса:

— Çак етемрен пайанхи çын тăвас пулмасан, аннен ачи еп пулмăп,—тет сылтăм аллине малала тăратса ашшĕ-амăшĕ йеннеле йарса.

Старик хĕвел çине пăхнă чухнехи пек куçĕсене мăч-мăч выљљатса илет.

---

## Вутпуççисем

** Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Траљкассинчи пуçламĕш шкулăн пахчинчи купăстасене хураллама сурăхсемпе качакасене хушнă. Вĕсемпе пĕрлех пахчара хуçасăрлăх ик аллине кайала тытса кунĕнçĕрĕн çӳрени палăрат. Хуçасăрлăх тени шкулăн пуçлăхĕнчен ӳтленсе çуралса шкул пахчине вырнаçнă, теççĕ.

** Урпаш йалĕсем (Елĕк р.) Софронăв, райфора бухалтĕр пулса ĕçлекенскер, Елĕк столовăйĕнче аш йаман йашка антарса парсассăн, йашкине çимест, „тутлă мар“ тесе тĕртсе йарат. Хăй патшалăха аш-какай 52 килоран пĕр кило та паманчĕ-ха. Аш-какай вырăнне, йĕплĕ сăмах çитертĕмĕр. Тутлă пулчĕ-ши? Çырса пĕлтертĕр.

** Ишлейре пурăнакан çынсенчен:—ăçта сирĕн вулав çурчĕ тесессĕн, тӳрех çапла кăтартса йараççĕ:—çапла, çапла кайсан, пысăк çăрапа питĕрнĕ хупă ларакан çурт курма пултаратăр. Çавă пулат пирĕн вулав çурчĕ, теççĕ такам çине тарăхнипе тфу! тесе сурса йарса. Вулав çурт пуçлăхĕ Миронăв куљтмассăлă ĕçе пĕтĕмпех пăрахнă та, халĕ ăна ниçта шыраса та тупаймаст. Пирĕн „Капкăн“ картине килсе пăх, кунта тупса йама пултаратпăр.

** Вăрăн çĕлĕкĕ çунат, теççĕ ваттисем. Хусантайкă колхоз (Ишлей р.) завхозĕ Ишетерăвпа Сапожникăвăн пуçĕсем çинче çĕлĕкĕсем çунмаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем колхоз амбарĕнчен тырă вăрласа ăсатма хăтланнă чухне çĕлĕкпе мар, картуспа пулнă. Çĕлĕкĕсем çунман пирки, вĕсене тырă вăрланă çĕрте Маркăвпа Иванов дозорсем тытнă пулин те, халĕ те ирĕкрех çӳреççĕ. Колхоз председателĕ Маркăв пулăшнипе, ӳлĕм те ирĕкрех çӳреме шухăшлаççĕ.

** „Капкăн“ 3-мĕш номĕрĕнче „Вутпуççисем“ пайĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи кино-механик Иванов çинчен çырни тĕрĕс мар пулнă. Ивановĕ мар, çыраканĕ хăй (Ф.) вутпуççилĕ пулнă. Çавăнпа Иванова „вутпуççисем михĕнчен кăларса“ хăй ăçта кайас тенĕ çавăнта кайма ирĕк паратпăр.

## Вĕрену́ çулĕ пуçламăшĕнче

Шупашкар районĕнче хăшпĕр йалсовечĕсем март, апрел, май уйăхсемшĕн те учителĕсене ĕçукçи тӳлесе татман (Парти Контроль Комиççин Чăваш республикинчи партколлегийĕ августăн 2-мĕшĕнче йышăннă постановленирен).

*Çверчков* ӳкернĕ.



**—Пĕр уйăхра илмели ĕçукçи çумне тепĕр уйăхра илмели ĕçукçине пĕрле туса хушмала пулсан, çав действийе вырăсла епĕр мĕнле калатпăр?**

**—„Задержка зарплаты“ тетпĕр.**

---

### Йулашсен отвечĕ.

Йулашри (Елĕк р.) „Ворошилăв“ колхоз çынисенчен такам та пулсан:—ма есĕр сӳресене уйа пăрахса хăварса калча айне турăр, ма илсе кĕмерĕр?—тесе ыйтсан: „епĕр тыррине вырсан, вăл вырăна каллех суха тунă чух кирлĕ пулат терĕмĕр, теççĕ.

Анани Шоç-Ваç.




## Кам çинчен.

„Ма çывăран ес, мужик?
Çуркуннеçке урамра?
Кӳршӳсем сан тахçанах
Ĕç тăваççĕçке ара“.

Çапла çырнă авал 1809-мĕшпе 1842-мĕш çулсен хушшинче пурăннă вырăссен паллă поечĕ Колцов А. В.

Кам çинчен çапла каланă тетĕр есĕр? Хăшĕсем калаççĕ: Советсен конкурсне халĕ те хутшăнман Йетĕрне районĕнчи Хучаш йалсовечĕ çинчен каланă, теççĕ. Теприсем калаççĕ: Тутаркас районĕнчи Шарпашри „Хĕлхем“ колхоз халиччен те силос хывма тытăнманни çинчен каланă, теççĕ. Тата теприсем: йулашки займ укçине пĕр пус та пухман Турхан йалсовечĕ (Çĕмĕрле рай.) çинчен каланă, теççĕ. Есĕр мĕнле калатăр,—çавăн çинчен пире çырусем йарса халех пĕлтерме ыйтатпăр.

## Мăн хырăм.

Елĕк районĕнчи „Хирлеп“ колхозăн ревизи тунă хыççăн 180 пăт ыраш тухман.

— Ăста кайнă вăл тырă?

— Çав тырра колхоз завхозĕ Терентйĕв салатса йанă.

180 пăт ыраш пĕр тăруках çисе йаракан Терентйĕв завхоз кӳпĕнсе вилесрен хăраман. Çапах та унăн хырăмĕ кӳпĕнни такама та палăрат.

Выљăх кӳпĕнсен, ăна супăн шывĕ ĕçтереççĕ, тет. Епĕр ăна йĕплĕ çăмах пĕçернĕ йашка çитерсе сиплесе йаратпăр.

## Терентйĕв ăшчикки.

Çын ăшчиккине тавăрса пăхма кĕрĕк çанни мар вăл, тенĕ авал самокртикăна йуратман çынсем. Çавăнпа Тăвай районĕнчи Алдиарăвă йалсовет председателĕ Терентйĕв й. ăшчикине тавăрса пăхар мар. Унăн ăшчикки йулашки вăхăтра ерехсăрапа тулса ларса, хаљхи вăхăтри хуçалăхпа политик кампанисене иртерес тĕлĕшпе йалсовет кайра пынине сисми пулни тавăрса пăхмасăрах паллă.

— Авă алăкран колхозăн халĕ çеç килнĕ çĕнĕ тырри шаккат. „Килтĕм епĕ. Мана хăвăртрах пухса кĕртĕр“, тет. Ăна Терентйĕв:

— Манăн пайан вăхăт çук. Ыран кил,—тесе ăсатса йама пикеннĕ.

Ӳсĕр чĕлхи унăн çав сăмахсене çеç калама йуратат, ытти кирлĕ сăмахсене калама çаврăнмаст.

## Ш ă р ш ă.

Л. Толстой çырнă: „кашни çемйенех хăйĕн шăрши кĕрет“ тенĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Мотор“ колхоз правленинчен йапăх шăрши кĕрет. Чылай колхозниксене халĕ те ĕçкĕнекисем алла паман. Ĕçкунĕсене вăхăтра çырса пыман.

Çакă йапала „Мотор“ колхоз колхозри ĕçсене тĕрĕс хисепе илесси çине мĕнле куçпа пăхнине палăртса тăрат. Тӳррипех каламала ĕнтĕ, вĕсен учот çине пăхмали куçĕсем чалăш, тата чирлĕ. Анчах мĕн тăвăн ĕнтĕ... вĕсен урăх куç çук пулсан.

## Акмасăр, вырмасăр пулнăскерсем.

Лессинг (1729—1881-мĕш çулсенче пурăннă нимĕçсен писателĕ) каланă: Рафаељ художникăн аллисене касса татса пăрахсан та, вăл пурĕпĕрех живописĕç пулмала, тенĕ.

Çавăн пекех епĕр калама пултаратпăр Трак районĕнчи „Октăбĕрĕн 14-мĕш çулĕ“ колхоз председателĕ çинчен. Унăн пусĕ çук. Пусĕ çук пулин те колхоз председателĕ вырăнĕнчех ĕçлесе пурăнат. Пусĕ пулман пирки пĕрлештернĕ лашасене хăйсен ĕлĕкхи хуçисене салатса панă. Лашасене пăхнăшăн кашни колхознике ĕçкунĕсем шутласа параççĕ.

Ухмахсене акмаççĕ, вырмаççĕ, вĕсем хăйсемех, пулаççĕ, тесе каланă авалхи çынсем.

## Сунчăксем кирлĕ.

Пĕлтĕр епĕр „Капкăнта“ шкул ачисем йĕпе çанталăкра партăсем хушшинче сунчăксем карса вĕренсе ларни çинчен фелйетон çапăнăччĕ. Çавăн пек сунчăксем карса вĕренмеле пулат пулĕ кăçал Тутаркас районĕнчи Шатракасси шкулĕнче. Шкул çивитисем пит йапăх, çумăр шывĕ класа анат. Йалсовечĕ йусасси çинчен шухăшлани палăрмаст.

Шкулта ларма сунчăксем илĕччĕç те ачисем, анчах Шатракасси кооператив лавкинче вĕсене сутмаççĕçке. Ăçтан илмелине йалсовет тупса патăр.

## Вилнĕ çын.

Çĕлĕкĕрсене илĕр! Вилнĕ çын çинчен пырат сăмах.

Шупашкарти Гоçтиницă столовăйĕ пуçлăхĕн заместителĕ Изванăв й-ш столовăй ваљљи конвенцбӳро кăтартнă хака пăсса 120 кило аш илнипе ты-

тăннă. Илнĕ аша (1025 тенкĕлĕх) конвенцбÿро конфискацилесе лартаť (Чăваш конвенцбÿро председателĕ Ефимăв малтан Изванăв майлă пулса совет законĕсене пăсасшăн пулни ҫинчен кунта ҫырмастпăр).

Изванăв вара, конвенци хакĕсене пăсма хушман совет законĕсене чăтма хал ҫитмен пирки, ҫакăн пек запискă ҫырса хатĕрлет (вырăсла ҫырнă записка чăвашла паратпăр):

„Сывă пулăр манăн ратнесем тата йуратнă ывăлăм Йакăв Ҫпиридонович! Епĕ пайан вилме шухăш тытрăм. Еп вилнĕшĕн никама ан айăплăр. Епĕ хама хамах вĕлеретĕп. Службăра тăнă чухне мана ниҫта та штрафламан, капла пулнине епĕ чăтаймастăп. Майăн 1-мĕшĕнче ман сывлăхшăн Ҫĕрпÿ райĕҫтăвкомĕ ҫитĕр. Сывă пулăр!
Изванов.
РИК оргпайне — Павлăва парăр".

Изванăв вилнĕ тетĕр-и? Ҫук. Вилме шухăшламан та вăл. Штрафран хăтăласшăн ҫавăн пек ҫырса аппаланнă.

Чейе Мĕтри пичче: хăй вилнĕ, ҫапах куҫĕсем чĕррĕн пăхаҫҫĕ.

## Совухмах тĕлне пулнă хут.

Тинĕс ҫинче пыракан карап шыв айĕнчи чул тĕлне пуласран хăраť, пĕр учреждениран тепĕр учреждениййе ҫÿрекен хут совухмах тĕлне пуласран хăраť.

Ҫĕнĕ Чурашри (Йĕпреҫ районĕ) йалпо председателĕ Топтыгин Илларион районри халăх сутне Ново-Климăври Макарăв Павĕлран 283 тенкĕ те 89 пус укҫа шыраса илме зайавлени ҫырса параť (йалпо ҫумĕнчи агĕнт пулса ĕҫленĕ чухне кооперативран йалхуҫалăх таварĕсем пухма тесе, промтавар тата укҫан илсе, пĕр пуслăх та чĕрĕ тавар хатĕрлесе памасăрах, вырăнтан тухса кайнă).

Ҫак хут таҫтан райсойуз правленине килсе ҫакланаť. Ку ҫав хут ҫине ҫапла резоԉуци хурса лартаť:

„Секретарю
Срочно запросить все Сельпо о наличии остатка $1^1/_2$ фунтовые отчислени по культуром и на общие количество. Составьте сведение. Запросить Чувашхлеборга о разрешении выдачи на руки работникам сельпо"

от 27—VI—35. Пред. РПС Рагужин

Резоԉуци хураť те, уйăх ытла ҫак хут машинисткă аллинче выртаť.

Рагужинăн куҫ курмасť пулсан, 12 хут куҫлăх тăхăнтартас. Вуласа пăхса резоԉуци ҫыртăр малашне.

## Йарапайсем.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Карăк-Ҫырми шкулĕн партăсем ҫителĕксĕр.

— Урайĕнчех ларса вĕренмеле пулаť-ши?—теҫҫĕ вĕренекенсем.

„Йарăм-йарăм йарапай, йарăнтарса пулмĕ-ши? Ҫакă пÿртри халăха тĕлĕнтерсе пулмĕ-ши?—тенĕ пек, пĕтĕм Хĕрлĕ Чутай районне тĕлĕнтерет вĕренÿ ҫулне хатĕрленменнипе Карăк-Ҫырми шкулĕпе йалсовечĕ.

## Сат пахчинчи сар панулми.

Йĕплĕ хулăран йĕплĕ хулă пулаť, панулми йăвăҫҫинчен панулми пулаť, чийе йăвăҫҫинчен чийе (вишнĕ) пулаť. Ҫĕпрел районĕнчи (Тутар республики) Анат Хурăнвар колхозĕн сачĕнче ÿсекен 1000 улма йăвăҫҫипе 2127 тĕп чийе йăвăҫҫинчен ÿлĕм мĕн пуласси паллă мар, мĕншĕн тесен вĕсем пĕлтĕр аван чĕрĕлнĕскерсем, кăҫал картасăрах лараҫҫĕ. Карта ҫук пирки вуникĕ качака пĕр харăс тытăннă улма йăвăҫҫисене шуратма... ҫулҫисене пĕрерĕн-пĕрерĕн иртме.

Кĕтÿ патĕнче кашкăр ҫÿрет, сурăхсене тытасшăн, выԉăхсене пăвасшăн, Хурăнвар сачĕнче кахаллăх ҫÿрет, улмуҫҫисемпе чийесене хăртасшăн, саť илемне йарасшăн. Ҫăлăр, ҫăлăр йăвăҫсене качакасенчен те, кахалсенчен те ҫăлăр!

## Ĕрчетекенсемпе вĕлерекенсем.

Белоглински районра (Донҫи Ростов) Сталин йачĕпе тăракан колхозра пĕр „Лÿтра" йатлă сысна ами ҫулталăк хушшинче иккĕ ҫăвăрласа 36 ҫурă туса панă. 36-шĕ те чĕрĕ.

Нумай вĕт! Нумай ҫав! Писенчук йалĕнчи (ҫав районах) „Коминтерн" колхоз ферминче сысна пăхакан Уланăвă Марийе, Лазĕрĕвă, Сахтерăвă, Илтерăвă йулташсем сысна ҫавăн чухлĕ ҫăвăрласа пама пултарнине ĕненмеҫҫĕ те, мĕншĕн тесен, вĕсен сыснисем ĕрчес вырăнне вилсех пыраҫҫĕ (ҫĕнĕ ҫултанпа, ваттисемсĕр пуҫне, 97 пĕчĕк ҫăвăр вилнĕ).

Кун чухлĕ сысна вилни ҫинчен епĕр хамăр журнала ҫыратпăр та, анчах епĕр ҫырнине хамăрăн клас тăшманне ан вулаттарăр. Мĕншĕн тесен, вуласассăн вăл савăнма пултараť, тата епĕр асăннă сысна пăхакансене „еп хушнă пек турăр" тесе пуҫран ачашласа йама пултараť.

Унăн вырăнне луччă сысна пăхакансене прокурора „ачашлаттарас". Уголовнăй кодексăн паллă статйисемпе лайăх ачашласа йама пултараť вăл намăса пĕлменскерсене.

---

# Пайанхи йалта

Хăш-пĕр поетсем колхозсене кайса курмасăрах колхозсем ҫинчен икĕ-виҫĕ томлă поемă ҫыратпăр, тесе ҫÿреҫҫĕ.
(„Капкăн" архивĕнчен).

Авă, пĕр ҫын пыраť ҫулпала,
Вăл хуларан килет йалала.
Вăл пĕр-пĕр сăвăҫ пулмала,
Сăмах купийĕ сăвăлаť:
Ҫĕнел, ҫĕнел кив тĕксĕм йал,
Еп сан патна пырап пайан...

Пĕлмест вăл йал ҫĕнелнине,
Йалта куԉтурлăх ÿснине...
Йала курмасăр, хуларах
„Ҫĕнел ес йал"—тесе лараť.
Вăл тÿсеймесĕр критике пайан
Йал илемне курма кайаť.

Йала вăл ҫитрĕ. Кĕчĕ пĕр киле.
Йĕри-тавра пăхса илет:
— Аван колхозникĕн ҫурчĕ, тет,
Кунта пит лайăх пурăнма...
— Ку ҫын пурăнмали ҫурт мар,
Сысна вити ку пирĕн,—тет Мĕкĕге.

В. Пукаш.

*И. Кашлинке.*

# Колхозри Ваҫкӑ

I.

*Савнӑ йулташ!*

Савнӑ йулташӑм, Микулай, пайанхи ёҫе пӑрахсах сан патна ҫыру ҫырма лартӑм. Питӗ хӗрхенес килет манӑн сана. Есӗ пирӗн пек кунӗ-кунӗпе ҫӗнӗ вӑйӑсем выҫҫаймастӑн. Йалан кирпӗч катӑкӗсене сӑтӑркаласа „ёне сӑватӑп" тесе пӳрт ҫумӗнчи тусан ӑшӗнче ларатӑн. Санӑн аннӳ те, аҫу та ытти ҫынсенчен урӑхрах ҫынсем. Вӗсем сана, хай леш, кӗрпе пӑтти ҫитерес вырӑнне, уйран ӑшне ҫӑкӑр татки тураса ҫитереҫҫӗ те вара санӑн хырӑму кун-каҫипе кӑвас йӳҫнӗ пек пӑкӑр-пӑкӑр, пӑкӑр-пӑкӑр! туса ҫӳрет. Сана вӗсем ҫӗнӗ кӗпе, ҫӗнӗ йӗм ҫӗлесе памаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та йалан есӗ ҫӗтӗк хырӑмлӑ кӗпепе ҫӳретӗн. Вӑл та питех тарӑхтармасӑ, вӑт санӑн питне ҫуса йаманни тарӑхтарать. Ҫиленсе ҫитнипе хамӑн пӗчӗк чышкӑсемпех хӗнес килет манӑн вӗсене.

— Ача питне ытла таса тытмалӑ мар, куҫӑхать ача,—тет санӑн аннӳ. Сывлӑх—тасалӑхра иккенни ҫинчен тем чул доклад итленӗ пулсан та ӑнланманшӑн варҫас килет манӑн. Капла пыҫҫӑкланса ҫӳресен трахом та йерме пултарӗ.

Акӑ ҫитес кунсенчех тырӑ вырма кайаҫҫӗ. Сана ун чух йе киле питӗрсе хӑварӗҫ, йе хире хӑйсемпе илсе кайӗҫ. Ех, санӑн илемлӗ мар пурнӑҫу! Мӗн чухлӗ йӗрес пулать? Пӗр майах йӗрнипе вар хырӑму та хытса ларӗ. Аҫу-аннӳ колхоза кӗменшӗнех тертленетӗн есӗ.

Вӑт санӑн пирӗнпе пӗрле выҫҫаса курасчӗ. Кун каҫипех выҫҫатпӑр: йе шашкӑ патакисемпе, йе карталанса, йе мечкӑ персе, йе тата пӗрлешсе йурлатпӑр, колхоз пахчине кайса хӗвел ӑшинче хӗртӗнсе выҫҫатпӑр. Пире ирхине вӗретнӗ сӗтпе печени, пӗр стакан чей, пӑтӑ ҫитереҫҫӗ. Кӑнтӑрла манни кӗрпе пӑттине, туранӑ ашран тунӑ „темскерӗ" кавлетпӗр. Ҫапла ҫисе пурӑнса халӗ епӗ самӑрӑлсах карӑм. Анне йаланах:—Ваҫкӑн алтунисем манӑнни пек пулса кайнӑ,—тесе мана пуҫран ачашлать. Атте те мана хӗртмест.

Кӑнтӑрла кунӗпех чупса ёшӗннӗскер каҫхине киле таврӑнсан, хамӑн кравать ҫине кайса выртатӑп. Манӑн ҫытарисем шапшурӑ, утйалӗсем таса.

Ну, Микулай тусӑм, кунпала ҫитӗ. Курсан татах каласа кӑтартӑп хамӑн пурнӑҫ ҫинчен. Курма тӗл килмесен тепӗр ҫырура ҫырса пӗлтеретӗп. Халӗ пӗчӗк пӳрнесем ручкӑ йӑтса ывӑнсах карӗҫ. Сывӑ пул! Колхоз ачи,—виҫӗ ҫулхи Ваҫкӑ.

II.

*Хӗрӳлӗ салам!*

Тавтапуҫ сана, Ваҫкӑ йулташӑм, мана манманшӑн. Санӑн ҫыруна вуласа тухсан тем пекех савӑнтӑм. Иртнӗ каҫхине тӗлӗкре те кунӗ-кунӗпех сирӗнпе пӗрле ҫӗнӗ вӑйӑсем выҫҫарӑм. Манӑн ҫире те сан ҫири пекех кӗске ҫаналӑ шурӑ кӗпе пек, кӗске йӗм пек. Манӑн та санӑнни пекех пӗчӗк кровать пур пек. Анчах вӑранса кайнипе ҫаксем веҫех куҫран ҫухалчӗҫ. Манӑн ҫире каллех ҫӗтӗк кӗпе курӑнса карӗ. Тарӑхнипе йӗрсе йатӑм.

— Мӗн йӗрсе выртан, шуйтан ачи!—терӗ атте. Унтан купарчаран аллипе икӗ хутчен чант, чант! тутарчӗ. Ҫапла йӗре-йӗрех тепӗр хут ҫывӑрса карӑм. Епӗ тӑнӑ ҫӗре пӳртре никам та ҫук. Тула тухас тесе алӑка тӗртсе пӑхрӑм, алӑк уҫӑлмасть, тултан тӗкӗленӗ пулмала. Вара каҫ пуличчеех сак ҫине ларса хӑварнӑ уйранпа ҫӑкӑр татки кӑшласа кун каҫрӑм. Вӑт ҫапла пӑрахса хӑвараҫҫӗ мана аннесем хӑйсем ёҫлеме кайнӑ чух.

Пӑркун анне хӑй купӑста лартма кайнӑ чух пӑрӑва кӑкарнӑ пек кантрапа сак ҫумне кӑкарса хӑварчӗ. Месерле выртса та туртӑнатӑп, кантӑрине шӑлсемпе ҫыртса та пӑхатӑп, ҫук вӗҫерӗнмест. Вӑл кӑна анчах-и? Ех, пурне те ҫырас пулсан... Аван мар манӑн ача пурнӑҫӗ, сирӗнне ӑҫтан ҫитес.

Атте леҫсе йамасан хамах тарса пыратӑп сирӗн пата. Ан ҫилен сахал ҫырнӑ тесе, манӑн пӗчӗкҫеҫӗ пурнесем ывӑнсах кайрӗҫ. Сывӑ пул!

Колхоза кӗмен ҫынӑн ачи—икӗ ҫулхи Микулай.

III.

*Ырӑ кун, Микулайӑм!*

Чи малтанах сана ырӑ сунса аллусене чӑмӑртатӑп.

Микулай йулташӑм, санӑн ҫыруна хам кӑна мар, пӗтӗм колхоз сатӗнчи ачасене вуласа кӑтартрӑм. Вӑл ҫырува вуланӑ чух шӑна вӗҫни те илтӗнеччӗ пулӗ. Вуласа пӗтерсен пӗтӗм ача пухӑвӗ хумханса кайрӗ.

— Намӑс ачасене ҫапла пӑхакан ашшӗ-амӑшӗсене!

— Пире тутлӑ апат, лайӑх тумтир, савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ парӑр.

Сӑпкарисем пӗчӗкҫеҫӗ чышкисемпе йунаса ҫухӑраҫҫӗ, ура ҫинче утаканӗсем урисемпе тапӑртатса вӑрҫаҫҫӗ.

Сан аҫу ҫине—колхоза кӗмесӗр хӑйӗн ачине нушалантараканскер ҫине, пурте ҫиленчӗҫ.

— Пӗчӗк Микулайа ҫӑлас пулать!—терӗҫӗ пурте. Ҫитес кунсенчех аҫу аннӳне ӑнлантарма пыратпӑр.

Тепӗре куриччен сывӑ пул! Йулташу Ваҫкӑ.

IV.

*Ваҫкӑ!*

Тавтапуҫ сана. Сан ҫырува вуласа пӑхнӑ тӑрӑхӑн анне кӑмӑлӗ ҫемҫелсех кайрӗ. Ёнер апат ҫисе ларнӑ вӑхӑтра вӑл аттене акӑ ҫапла каларӗ:— колхоз ачисем ытла та лайӑх пурӑнаҫҫӗ-ҫке? Тутлӑ апат ҫиеҫҫӗ, таса тӑхӑнаҫҫӗ, тата тем, патефон теҫҫи ҫав, ҫавна итлеҫҫӗ. Микулайа ҫапла усрасан аванчӗ те!—терӗ. Атте ытти чух аннене вӑрҫачӗ, пайан вӑрҫмарӗ. Тем, шухӑш тытнӑ пулмала колхоза кӗме. Урамсем ҫирӗпленсе ҫитсенех сирӗн пата чупса пыратӑп. Сирӗн колхоз ачисен пурнӑҫӗ савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ. Манӑн та сирпе пӗрлех савӑнса пурӑнас килет.

Тӗп пултӑр ачасене нушалантарса пӑхса ӳстересси.

Ҫитес кунсенчех тӗл пуличчен сывӑ пул!

Санӑн йулташу: Микулай.

*Ф. Ванин.*

# Лашапа Ҫимпур

*(Йуптару).*

Ҫӗршыв типрӗ,
Ҫураки ҫитрӗ.
Хӗлӗп тухрӗ сухана.
Куншӑн ӗнтӗ
Ҫынсен те, выӆӑхсен те
Йатлама май ҫук ӑна.
Анчах хура лаша
Таках хуралашат̆:
— „Ухмах ман хуҫа,
Мӗскершӗн-ха вара
Ҫӳрет вӑл мана хуса
Ӑна йӗри-тавра?..
Кӑкарчӗ хыҫран темскерле
Ҫӗре ҫӗтекенскерне...
Акӑ ӗнтӗ, курӑр-ха:
Ҫак ӗҫ ӗҫ-и-ха вара? —
Йем йешерен курӑка
Ҫӗрпе витсе хӑварат̆.
Ҫак тискерлӗхе курсан
Йепле хурланмӗ ха чӗрем?..
Вӗт, сухаламан пулсан,
Ҫак уй пулайӗччӗ ҫерем.
Тен епӗ те вӑл ҫереме
Тухӑттӑм уҫӑлса ҫӳреме"...

* * *

Ҫуркунне те, ҫу та иртрӗҫ,
Иртрӗ кӗркунне,
Акӑ хӗл мучи те ҫитрӗ
Мӑкӑртса шур курпунне.
Хӗлӗп пӗрре
Хӗллехи сивӗре
Те армантан,
Те вӑрмантан
Килне таврӑнчӗ те, лашине тӑварчӗ,
Типӗ апат пачӗ,
Пӑртак тӑрсан ӑна шӑварчӗ,
Витене кӗртсе йачӗ.
— На сана сӗлӗ,
Ҫи те — мӑнтӑрлан!
Ачашларӗ Хӗлӗп
Лашине мӑйран.
Лаша курчӗ
Куритари сӗлле,
Пуҫне пӑрчӗ
Хӗлӗп йенеле:
— Ах, Хӗлӗп пичче,
Ҫитмен ес пиҫсе:
Ҫу каҫипе вӗт мана
Ним уссӑр ӗҫлеттертӗн,
Ҫеремленес анана
Плугӑпала ҫӗттертӗн...
Ун чухнех ҫакнашкал
Мана сӗлӗ парас,
Хӑвӑн та кал-кал
Пӳрте кӗрсе ларас —
Еп те килте канлӗн тӑмала,
Саншӑн та хуйхӑ сахал пулмала!.
Лаша ҫапла калаҫнине илтсен
„Ҫимпур" йатлӑ йытти Хӗлӗп пиччен
Тапратрӗ кулма лашаран: „Ха-ха-ха"...
Курман, лаша тус, еп сан пек ухмаха,
Пуҫунта пуш-пушах пуӆ сан.
Хӑв каланӑ пек пулнӑ пулсан̆,
Курайас та ҫук ес ҫак сӗлле:
Ҫӗрӗк улӑм анчах ҫимеле.

* * *

Иккеленсе тӑракансене,
Пайанлӑхпа ҫеҫ пурнакансене
Лашасене (икураллисене) еп
Йуптаруран урок илме сӗнетӗп.

## Лаша вӗлерчӗ

Тӑвай районӗнчи Тӑрмӑш йалӗнчи йединоличник Ф. Йакӑвлӗвӑн лаши вилнӗ. Вӑл 43 ҫулхи арӑмӗпе, 18 ҫулхи ывӑлӗпе, 15 ҫулхи хӗрӗпе лаши вилнӗшӗн ҫапла хуйхӑрат̆:

— Ех, лаша йулташӑм, есӗ 7 кун выҫӑ пурӑнса, выҫӑ пурӑнма хӑнӑхаймарӑн! Тепӗр икӗ кун выҫӑ пурӑнсан, пӗр апатсӑрах пурнаттӑн пуӆ теттӗм, тет.

**Павлӑв Константин.**

## Шӑпа.

Почтӑ уйрӑмӗ час-часах Вӑтакас Татмӑш пиҫмоносцине хаҫат-журналсем ҫителӗксӗр парат̆. Пӗрре ҫапла „Капкӑн" журнал 9 ҫын пуҫне 7 ҫеҫ панӑ.

— Есӗ йубилей йачӗпе тухнӑ „Капкӑна" вуласа тухрӑн-и?

— Вулама мар, тӗсне те курман.

— Мӗншӗн апла, есӗ подписчикчӗ вӗт-ха?

— Подписчикне подписчик та, анчах телейсӗрри епӗ. 9 ҫын пуҫне 7 килнӗ те, пиҫмоносӗц Игнатйӗв „Капкӑна" шӑпапа панӑ. Шӑпи мана тухман.

**В. Йӑваш.**

Ӳкерчӗкӗ „Крокодил" журналӑн



**Бӳрократсене ҫакӑн пек пусса лапчӑтмала.**

# Хучĕ çине ак çапла ÿкнĕ пулĕ тетпĕр

Куваккинă районĕнчи турăсăрсен организацисен ĕçĕсене массă пĕлмест. Пухусем туса тĕне хирĕçле ыйтусене массăсем хушшинче сÿтсе-йавман. Хăшпĕрисен ĕçĕсем хут çинче çеç (Сатурн йаякор).

Ÿкерчĕкĕ „Крокодил" журналăн.



**Çапла, йулташсем, пирĕн турăсăрсен организацин ĕçне ырăлас предложени пур. Хирĕçекен çук-и? Пĕр сасăпах йышăннă тесе шутлатпăр.**

# Словарсем çук пирки

Рабочисемпе колхозниксен масси культурă тĕлĕшĕнчен нумай ÿсрĕ, çапах та кĕнекесемпе хаçатсенче ăнланмала мар сăмахсем нумай тĕл пулаççĕ. Тĕрлĕ йышши словарсем кирлĕ. („Известия" хаçатран).

*Г. Панов* ÿкерчĕкĕ. Уйар шухăшĕ.



Старик (ăнланаймасăр журнална айаккала хурать): — Так ... „Агресăр" .. „Агресăр"... Мĕн-ха вăл агресăр? „Аграрни" сăмахран мар-ши? Апла тесен малтанхи пайĕ çĕрĕç тунине пĕлтертĕр. А „сăр" тата? Сăр шывĕ çывăхенче çĕрĕç туни тейепĕри? Çапла пултăр еппин. Ах, ку словар çукки... Кашни сăмаха „агресăра" сыпăкламă пек сыпăкласа ăнланас пулсан ку наукă журналĕ ерне вулама та çитĕ!

# Културлӑ калаҫу

„Совет сойузӗнче литературӑ пӗччен-иккӗн ҫын ӗҫӗ мар, массӑ ӗҫӗ. Литературӑна пӗтӗм массӑ хутшӑнчӗ... Колхозник суха сухалаҫ—хӑй шухӑшласа кӑларнӑ йурра йурлаҫ, кейӑлкӑ ҫавӑраҫ—хӑй ҫырнӑ сӑвва калаҫ". (А. Фадейӗв докладӗнчен)

*Данилӑв* худ. ӳкерчӗкӗ. Хв. Уй-хир шухӑшӗ.



— Есӗ пайан уҫӑлса ҫӳреме хулана кайасшӑнчӗ. Кайаймарӑн-и мӗн, инке?
— Сӑвӑ ҫырма тытӑннипе пулаймарӗ ҫав, кин! Пушанаймарӑм.

*И. А. Гончаров.*

# Захарпа Обломов

(„Обломов“ романран илнӗ сыпӑк).

Пиллӗкӗмӗш сехет пуҫламӗшӗнче Захар йерипен, ним шавсӑр малти пӳлӗм алӑкне уҫрӗ те чӗрне вӗҫҫӗн утса хӑй пӳлӗмне карӗ; унта вӑл улпут кабинечӗн алӑкӗ патне пырса тӑрса, малтан алӑкӗ ҫумне хӑлхине лартса итлерӗ, унтан куклен се ларса куҫне ҫӑра шӑтӑкӗ тӗлне туса пӑхрӗ.

Кабинетра виҫевлӗн харлаттарни йанӑраса тӑрат̆.

— Ҫывӑрат̆;—вӑратас пулат̆: халех пиллӗк ҫитесси ҫур сехет йулат̆. Кх!

Вӑл кабинета кӗрет.

— Илйа Илйич! А Илйа Илйич!—пуҫларӗ вӑл Обломов пуҫелӗк умӗнче тӑрса хуллен.

Харлаттарасси чарӑнмаст̆.

— Екӑ мӗнле ҫывӑрат̆—чул йатса ёшеннӗ ҫын пекех! Илйа Илйич!

Захар Обломова ҫӑмӑллӑн ҫаннинчен туртса пӑхат̆.

— Тӑрӑр: пиллӗк сехет ӑшне кайни ҫур сехет. Илйа Илйич хирӗҫ темӗскер мӑкӑртатрӗ те, анчах вӑранмарӗ.

— Тӑрӑр-ха ӗнтӗ, Илйа Илйич! Намӑс пулат̆!—тет Захарӗ сассине хӑпартса.

Ответ ҫук.

— Илйа Илйич!—чарӑнмаст̆ Захар, улпут ҫаннинчен ҫӑмӑлӑн турта-турта илсе.

Обломов пуҫне кӑштах ҫавӑрчӗ те, йавӑрӑн хӑрах куҫне уҫрӗ. Куҫӗнчен паралич пӑхнӑ пекех туйӑнса карӗ.

— Кам унта?—ыйтрӗ вӑл хӑрӑлтатакан сассипе.

— Епӗ! Тӑрӑр ӗнтӗ!

— Кай кунтан!—мӑкӑртатса илчӗ Илйа Илйич, каллех йавӑр ыйхӑ айне пулчӗ.

Харлаттарасси вырӑнне сӑмсапа шӑхӑрасси илтӗнме тытӑнса карӗ. Захар тумтир аркинчен туртма тытӑнчӗ ӑна.

— Мӗн сана?

— Есӗр вӑратма каларӑр хӑвӑра.

— Ну, пӗлетӗп. Есӗ хӑвӑн тумалине турӑн та вӗҫтер айакала! Ытти мана нимӗн те кирлӗ мар.

— Каймастӑп,—тет Захар, ӑна каллех ҫаннинчен турткаласа иле-иле тӑрса.

— Ну, ан турт!—йавашшӑн каласа хучӗ Илйа Илйич, унтан пуҫне ҫытар ҫине хурса каллех харлаттарма тытӑнчӗ.

— Йурамаст̆, Илйа Илйич,—терӗ Захарӗ:—епӗ хам та хавас пулмала та, анчах йурамаст̆.

Улпута турткалама пӑрахмастех хӑй.

— Тархасшӑн ан чӑрмантар!

— Тархасшӑн тетӗн, анчах кайран хӑвӑр: ма вӑратмарӑн, тесе вӑрҫма тытӑнатӑр!

— Ах, тур ҫырлах анчах санпала. Мӗнле ҫын есӗ!—тет Обломов.—Пӗр минут та пулин ҫывӑрса илме пар ӗнтӗ; ну, нумай-и вӑл пӗр минут? Епӗ хамах пӗлсе тӑратӑп...

Илйа Илйич, тӑрук ыйхӑ пусса лартнипе, сасартӑк сӑмах хушма та пӑрахрӗ.

— Ыйӑх ӑшне путма пӗлетӗн!—тет Захар, улпут илтмессине сиссе.—Ав супат̆, ӑвӑҫ тункати йевӗрӗн. Мӗн тума ес ҫут тӗнчене ҫуралса тухнӑ-ши? Тӑр ӗнтӗ! Сана калаҫҫӗ...—мӗкӗрнӗ пек каласа йанӑчӗ Захар, анчах...

— Мен? Мӗн?

— Мӗн, судӑр, тӑмастӑн тетӗп.

— Ҫук, мӗнле каларӑн есӗ—а? Ӑҫтан апла калама пултаратӑн есӗ—а?

— Мӗнле?

— Тӳрккес сӑмах калама!

— Есӗ тӗлӗкре илтрӗн пулӗ... тупата тӗлӗкре...

— Еп ҫывӑратӑп тетӗн-и? Еп ҫывӑрмастӑп, пурне те илтетӗп...

Хӑй калаҫса пӗтермесӗрех ҫывӑрса кайнӑ.

— Ну, тет Захар нимӗн тума пӗлмесӗр.—Ах, мӗскӗн пуҫӑм! Мӗн каска пек выртатӑн? Сан ҫине пӑхмашкӑн та кичем. Пӑхӑр-ха ырӑ ҫынсем... Тфу!

—Тӑрӑр ӗнтӗ, тӑрӑр!—сасартӑк хӑранӑ сасӑпа каласа йачӗ Захар.—Илйа Илйич, пӑхӑр-ха, йӗри таврара мӗн пулса иртнине...

Обломов пуҫне хӑвӑрт хӑпартрӗ, йӗри таврала пӑхрӗ те тарӑнӑн сывласа илсе каллех выртрӗ.

— Ан чӑрмантарса тӑр мана!—терӗ вӑл мӑнаҫлӑн.—Сана епӗ хама вӑратма хушсаччӗ, халӗ хушнине кайала илетӗп—илтетӗн-и? Вӑранас килсессӗн хамах вӑранма пултаратӑп.

— Тӑрӑр, тӑрӑр!—пӗтӗм сасран каласа йачӗ Захар, Обломова аркинчен те ҫаннисенчен те икӗ аллипех турткалама тытӑнчӗ.

Обломов ура ҫине сасартӑк сиксе тӑчӗ те Захар ҫине вӑркӑнчӗ.

— Тӑхта-ха, еп сана... ҫавӑрма чӑрмантарма вӗрентӗп,—терӗ вӑл.

Захар мӗн вӑй пур таран унран тарма тытӑнчӗ, анчах виҫӗ пусӑмра Обломӑв ыйхинчен пӗтӗмпех урӑлса ҫитсе анасласа карӑнса илчӗ.

— Пар-ха... квас...—терӗ вӑл анасланӑ хушӑра.

Ҫавӑнтах Захар ҫурӑмӗ хыҫӗнче такам йанӑравлӑн кулса йачӗ. Ха... Ха... Иккӗшӗ те ҫавӑрӑнса пӑхаҫҫӗ.

— Штольц! Штольц!—хавассӑн кӑшкӑрса йачӗ Обломов, хӑни йенеле утса пырса.

— Андрей Иванӑч!—терӗ шӑлне йӗрсе Захар. Штольц чарӑнма пӗлмесӗрех малала та кулса тӑрат̆: пулса иртнӗ сценӑна пӗтӗмпех вӑл курнӑ мӗн.

Мами куҫарнӑ.



# „Капкăна“ килнĕ çырусем

*„Капкăнçăм“!*

Пĕрре мана Улатăр хули урамĕсем тăрăх çÿреме тĕл килчĕ. Пынă хушăрах сарă илемлĕ сăрпа сăрланă пысăк вывĕскăна куçсем тĕллерĕç. Вулама тытăнтăм: „Хусанти Главспиртăн тĕн. склачĕ“ тенĕ. Куç-пуçсем чарăлсах кайрĕç, ик-виç хут вуласа тухнă хыççăн та çав-çавах.

Йепле тĕне склада пухнă, христос тĕнне-ши, йе магомет тĕнне-ши? Хÿрелĕ-ши, майракалă-ши тĕнĕ, питех те курса интересленес килчĕ, анчах умĕнче пысăк çăра çакăнса тăнине курсан малала пăрăнса уттартăм.

Главспиртăн „тĕн складне“ кĕрсе курас пулсан, малтан билет вырăнне пĕр чĕрĕк литр ерех илмеле-ши?—çавна пĕлесчĕ.

**Николай Овчинникăв.**

*Капкăн йулташ!*

Пирĕн Мăн Шетмĕ (Трак р.) лапкинче ĕç патне тухас умĕн çава, лупатка, çурла ыйтсассăн,—„çук“ тенĕ йапала тыттарса йараççĕ. „Çукпа“ мĕнле тырă çулма пулат-ши?—çавна пĕлме май килмерĕ,—пĕлмесĕр йулас марччĕ.

**Кулава çынни Киççерин.**

*Ăслă Капкăн!*

Вçесвйатски çырнă 5—6-мĕш çул вĕренмели „Ботаникă“ кĕнекин 110-мĕш страницинче, кантăр çинчен çырнă статйара: „Кантăр икĕ тĕрлĕ пулат: пĕри—пуса—тусан хатĕрлекен аçа туналă чечексем, тепри—кантăр—нăрă хатĕрлекен ама туналă чечексем пулаççĕ“ тесе ăнлантарнă. Кăна йепле ăнланмала-ши? Кĕнекен корректăрĕ хăй нăрăсен йăхĕнчен тухман-ши?

**В. Йăваш.**

*Савнă Капкăн!*

Кивĕ картинсем курас текенсен пĕр ернелĕх çăкăр чиксе Тивĕшри (Ишлей р.) вулав çуртне пырса курмала. Унта çук турăсен сăнĕсем темиçе те пур,—куçĕсене чармакласа лараççĕ.

Турăсем куçĕсене чармакласа лараççĕ, унти комсомолĕссем куçĕсене тутăрпа çыхса иртсе кайаççĕ.

Мĕншĕн куçĕсене тутăрпа çыхса çÿренĕ-ши вĕсем? А?

**Анани Шоç-Ваç.**

*Хисеплĕ Капкăн кукка!*

Манăн шанчăк питĕ сахал. Хăçан çитĕ ман çыру сирĕн пата? Ман ĕмĕрте çитĕ-и, çук-и? Питĕ айакра вĕт пиртен Шупашкар. Сахалтан та 300 километăр пур. Çырусем 20 çухрăма пĕр уйăх çÿреççĕ. Акă епĕ Аксу районри (Тутар республикĕ) хаçат редакцинчен çыру илтĕм. Унта мана районри йал корсен уйăх ытла ĕлĕкрех пулса иртнĕ сђотне чĕнеççĕ. Хам куçсене шанмасăр 3—4 хут вуласа тухрăм. 20 çухрăм... пĕр уйăх килнĕ. Çак хисеппе шутласан ман çыру Шупашкара 15 уйăх кайат. Питĕ те тĕлĕнмеле капла. Инçетри Хĕвелтухăçне çыру-мĕн йарасси çинчен калаçмали те çук. Унта çыру йарас пулсан, ху çуралсанах çыру çыр, атту ху ĕмĕрĕнте çитмест.

Çакăн пек ĕçлеççĕ кунти пуштăсем. Ыттисем те çапла ĕçлесен питĕ хĕн килет-ха çырусем йама.

**Ел—Йеван (Вађай).**

*Савнă Капкăн!*

Вăрмар районĕнчи Пысăк Йенкассипе Карак-Çырми йалĕ хушшинчи кĕпере çул çÿрекенсем питĕ хĕрхенеççĕ. Хĕрхеннĕ пирки, ун урлă каçма та тăрарах параççĕ. Ара кĕперĕ каçса çÿренĕ чух, хăнкăр-ханкăр туса кăшкăрса силленсе йулат. Нумай ĕмĕр пурăннăскер шăта-шăта пĕтнĕ вăл, карлăкĕсем çук, ракаткисем хуçăлса, ванса пĕтнĕ. Çав кĕпере йалсовет йусамаст. Хĕлле йусасса кĕтет. Хĕлле пулсан, çĕнĕ кĕпер пăртан хывса парĕ „сивмучи“, тет. Çавăнпа санран ыйтăп: йалсовет кĕтлĕ хĕл хăççан çитĕ-ши? **В. Шăнкăрч.**

*Йуратнă Капкăн!*

Манăн хваттерте 565 шăна. Вĕреннĕ çынсем каланă тăрăх, пĕр шăнаранах çу каçипе 5.589.729.000.000 шăна пулма пултарат (шăнисем пĕри те вилмесен). Ман пÿлĕмри 565 шăнаран çу вĕçĕнче мĕн чухлĕ шăна пулассине шутласа кăларма ăсăм-пуçăм та çитес çук. Çав ăсăм-пуçăм шутлама пултарайми пысăк цыфăр шăна манăн хваттерте ордĕр илмесĕрех хĕллечченех пурăнасси паллах, мĕншĕн тесен Шупашкарта нихăш лапкара та „смерть мухам“ тенĕ шăна хучĕ çук. Шăна хучĕсем сутма тивĕçлĕ лапкасемпе организацисен пуçлăхĕсем кăçал „шăна тусĕсен ушкăнĕ“ членне кĕни мĕн,—лапкасенче шăна хучĕсем сутмаççĕ?

**Шăна çыртнине тÿсекен.**

**РЕДАКЦИРЕН:** Ку заметкă çапăнса тухасса сиссе, августăн 2-мĕшĕнче Шупашкарта шăна хучĕсем сутма пуçларĕç.



*Вениамин Туртуш.*

# ЛАРИВАН

Çанталăк кĕр йеннеле тайăла пуçларĕ. Йал хĕрсех çуртырри вырат. Ернере пĕр-ик кун Лариван ывăлĕпе арăмĕ те колхозниксемпе ĕçлеме кайкалаççĕ. Лариван ниçта та тухмаст—çÿремест. Ахаљ лариччен тесе çывăрма тăрăшат. Анчах пÿрт тулли йайлатса çÿрекен пĕчĕк çеç шăнасем пĕрре те канăç памаççĕ ăна. Хăваласан та вăрттăн пырса çыртаççĕ. Тертлентереççĕ.

Пайан пушшех те урчĕç шăнасем. Лариван тĕлĕрнипе сиснĕ·сисменех сăмси çине тапăнса хыттăн çыртма пуçларĕç. Лариван, çилли вĕресе килнипе, шăнасене тавăрас шутпа:

— Хулигансем, пĕтĕр усалсем!—терĕ те, сăмси тăрне лартрĕ чышкине.—Айай!—çухăрчĕ унтан,—пĕтертĕм сăмсана шуйттан шăнисене пула!

Сиксе тăрса ларчĕ. Айаккисем ыратаççĕ унăн. Тертленсе вăрçат:

— Ахаљ выртсан та ырататăр. Пĕрре те канăç çук.

Унтан тăрук хăранă пек пулчĕ. Хăравçă шухăшсем пăтранчĕç пуçĕнче:

— Каплах пурăнсан мĕн курас-ха ман? Пĕр вырăнта выртса утма та манса кайăп. Вырт вара çак тенкел çинче пĕрене пек. Тăрас-ха. Пĕрер уйа кайса ĕçлесе пăхам-ха. Ўпкене пĕр-ик кубометр уçă та таса сывлăш тултарам.

Вăл майĕпе хиреле сулăнчĕ.

— Ха, упа килет!

— Ăçта, ăçта?

— Тытас!

— Çук-çке.

— Ик уралă ку. Етемренех пулнăскер. Лариван йатлă упа çинчен калатăп еп.

— Упаланчĕ çав. Ниçта та тухмаст. Пайан мĕнле килет-ши тата. Интереснă,—терĕ „упа килет" текенни хăйĕн кÿсек пек аллине Лариван йенеле тĕллесе.

Пурте ахăлтатса илчĕç. Каçалăк умне çитрĕ Лариван. Пуçĕпе айаккисене тăраниччен хыççан, ытти колхозниксемпе пĕрле жнейкă вырса хăварнă тырра çыхма пуçларĕ.

Анчах 2—3 сехетрен йăлтах пĕтрĕ ун хăват.

— Ех, ухмах, мĕншĕн килтĕм-ха кунта... Хама хам асаплантарма. Ах, веçех пĕтрĕ вăй. Ав, йепле шăпăртатма пуçларĕç тарсем. Фу, тамăкри пек ăшă пулса кайрĕ. Халех вĕçтерес киле,—шухăшларĕ ăшĕнче. Унтан, хăйне ĕçрен тарат тесе ан калатчĕр тесе, колхозниксем йенне çавранса:

— Пит пысăк ĕç тупăнчĕ, инкек! Кайам-ха. Бригадира калăр вара,—терĕ вăл йал йенеле пăхса.

— Пит пысăк ĕç тупăнчĕ тен? Ăçтан тупрăн ара ăна?..

— Кунта килнĕ чух-и?

— Пысăк пулсан—мĕн пысăкĕш пур? Пĕр гектар пек пур-и?

— Ха-ха-ха!..—Кулкаларĕç колхозниксем.

— Мĕскер кулатăр. Виç çулхи Мишкă чирленĕ-ха ман,—çиленнĕ пек чĕнчĕ Лариван.

— У, суйеçĕ. Чирлеменчĕçке, — терĕ Праски тĕленсе.

— Еп санран кайарах килтĕм вĕт. Ес хапхаран тухсанах лекрĕ еппин. Чир вăл пĕлтерсе килмест,—терĕ Лариван арăмне.

— Апла пулсан ман та кайас,—Лариван хыççăн уттарчĕ Праски.

— Ха-ха-ха!.. Ача чĕртме вĕçрĕç.

— Ача... ача сана. Кахал. Кахал чирне чĕртмеле вĕсен...

— Упаланчĕ Лариван. Хăй шăтăкне тарчĕ.

— Ха-ха-ха!—кулса йулчĕç колхозниксем.

* * *

Кĕркунне. Уйхирсем Кукша Илле пуçĕ пек çаралнă. Авăнсем те çапса пĕтнĕ. Тăрăшса ĕçленĕ колхозниксен пичĕсем çинче савăнăç. Вĕсем тутă. Вĕсен салхулăх çук. А, Лариван... Ăна салхулăх пуснă. Пысăк аллисемпе хайаррăн лăскат.

Виççĕн ĕçлесе 50 ĕçкунĕ тукаланă вĕсем. Йур ўкиччен тасалат тырри.

— Атте, мемме!—тет пĕр ачи йĕрсе.

— Çукçке, ачам! Ех-ха-хай!—тенкел çине йарт тăсăлса выртрĕ ашшĕ.

— Мĕнле пурăнăпăр, Лариван? Çулла ĕçлемелеччĕ çав. Виççĕн те тăрăшса ĕçленĕ тĕк...

— Çук, Праскийĕм, май тупас пулат пурăнма, май.

— Мĕнле май?..

— Халех. Шухăшлам-ха. Пуç миммине Паљља ударник пек ĕçлеттерем. Аха... Аха-а!. Итле, Праски, итле!.. Хывса пăрах тумтирна. Веç! халех!.. Çитмĕл çичĕ саплăклă кĕпе, çитмĕл çичĕ шăтăклă сăхман тупса тăхăн. Урусенче сухаллаңса пĕтнĕ çăпатасем çеç пулччĕр. Çурăм хыçне обйазательнă минтер чик. Сан каснă-лартнă курпун карчăк пулмала.

— Ухмах, çынсем кулса вилĕç. Апла тунипех хырăм тăранмĕçке. Йе Праски ваталчĕ тесе колхозран тырă парĕç тетĕн-и?

— Парĕç унта, айван... А ес, Петта, чирлĕ çын пек хытлан. Ан кăтартсам хăрах аллуна...

— Алла... Алăсăр йеплĕ пурăнас? Караул!..—тухса тарма тăчĕ Петта.

Ăна ашшĕ тытрĕ.

— Ухмах!—терĕ вăл.—Аллуна татмаççĕ санне. Пытар ес ăна, пытар. Ăнлантăн-и? Пытар.

— Мĕскер? Алла пытар тен? Мĕнле пытарас ăна? Мĕншĕн пытармала? Ăçта?

— Ак çапла çеç тумала ăна.—Пиншак тăхăнчĕ Лариван. Хăрах аллине çанă ăшне чикмерĕ. Хăрах алăсăр пек пулчĕ.

— Вот мĕнле тăваç ăна! Халех еп хушнă пек тулманăр. Выљамаççĕ вĕт сирĕнпе.

Лешсем чĕнеймерĕç. Хирĕçмерĕç. Тĕллĕннипе тата хăранипе çăварĕсене арбуз кĕрес пек карса Лариван хушнине пурнăçларĕç.

— Ха-ха-ха!—кулчĕ Лариван.—Çпектакăљ лартатпăр ĕнтĕ. Çпектакăљ.

— Ухмах, ухмаха йертĕн пуљ выçăпа,—йĕрсе йачĕ Праски.

— Мĕскерле ĕç вара вăл çăварпа çеç ĕçлемели? Алăсăрах ĕçлемеле-и? Çăкăр çинĕ пек чăмламала çеç-и?—ыйтат Петта.

— Çук. Чиркÿ йе пĕр-пĕр кĕпер умне пырса ларса:

— Пулăшăр инвалида!..

— Помогайте инвалиду!..

— Пулăшăр телейсĕре!..

— Помогайте несчастному!—тесе çеç лармала,—вĕрентет Лариван.
— А-а... Ыйткалама...
— Чейелĕх кирлĕ çав. Чăн-чăн кĕлеткене кăгартсан кам патăр-ха укçа... çимели,—терĕ Лариван хăй изобретателствишĕн хĕпĕртенипе пĕчĕк ача пек сиккелесе.

* * *

Хусан. Илемлĕ хула. Чупаççĕ трамвайсем, автобуссем. Йанрат ĕç шавĕ. Ĕçлет ĕççынни. Хăшĕ савăтра. Хăшĕ стройкăра. Лариван та 5 йедоклă çемйепе çĕнĕ ĕç пуçарса йанă.

— Ĕçлеççĕ-ха манăн „артиссем“. Пултараççĕ. Пуçтарăнат укçа,—кулкаларĕ Лариван хăй çемйи йепле ĕçленине пĕр-ик ернерен малтанхи хут ревизи тума тухсан.

———

Ман герой шухăшласа кăларнăскер мар. Лариван вăл Вăрмар районĕнчи „Вутлан“ колхоз членĕ. Колхозра ĕçлеме кахал пирки, вăл хăйĕн профеççине улăштарчĕ. Халĕ, куратăр, ун хăй йуратнă профеççийĕ—ыйткалакан. Çакă ĕнтĕ кахалсен йуратнă профеççийĕ.

## Столовăйа тăтăшах çÿрекен

Шупашкар вăрман промхозĕн Криуш участкин столовăйĕнче купăстасăр пуçне нимĕнле продукт çук.




— **Иккĕмĕш блÿдă мĕн сирĕн?**
— **Мĕнле намăс мар ыйтма, иккĕмĕш уйăх пирĕн столовăйра çийетĕн, пĕлместĕн!**

# Çемйонăв çинчен

Ишлей районĕнчи Тивĕшри пуштă уйрăмĕнче ĕçлекен Çемйонăв икĕ ĕç тума йуратат: хăйне ытти çынсене пăхăнтарма, тата çавсенех ултала-ма. Ийунĕн 9-мĕшĕнчи примера илер. Пĕр кĕреçе сухаллă ватах та мар колхозник лавкăран тухнă хыççăн чиркÿрен тунă клуб йеннеле утрĕ. Клуб умне çитсен унтала кунтала пăхкаласа илчĕ те „почта“ тесе çырнă алăкран шалала кĕрсе кайрĕ.

— Стоп!—кăшкăрчĕ Çемйонăв.

— Мĕн стоппи пур?—тĕлĕнсе ыйтрĕ колхозник хăйне кăшкăрнăран.

— Кам хушрĕ сана кунта кун пек кĕме?—терĕ лешĕ.

„Кун пек кĕме“ тенĕрен колхозник, хăйне таса-мартан калат терĕ пулас, урисене пăхса илчĕ. Нимле тасамарлăх та çук. Анчах çак вăхăтра ним те калаймарĕ. Чылайран:—Ĕç пулчĕ те кĕтĕм,—терĕ.

— Ĕç пулсан ыйтса кĕреççĕ.

— Ес ху ăçта та пулсан ыйтса кĕнĕ-и?

— Кунта ан тавлаш! Давай, часрах кала, мĕн ĕçпе килтĕн?

— Хаçат çырăнас тесеччĕ. Кĕме хушмастăн пул-сан, тухас?—тесе кăмăлсăрăн тухса кайрĕ кол-хозник.

Çемйонăв колхозник тухса кайнă хыççăн тути-сене сарсах лахлатса кулчĕ. Тепĕр кунне, ийуђĕн 10-мĕшĕнче, Çемйонăв патĕнче манăн пулмала пулчĕ. Укçа килнĕ пулнă. Хамăр писмоносеç Мар-кăв çакна пĕлтерсен, епĕ пуштăна кайрăм. Ыйт-масăрах кĕтĕм. Çавăншăн пулас Çемйонăв ман çине сив куçĕсемпе пăхса илчĕ. Укçана илтĕм. Пĕлсе тăнă çĕртех 32 пус улталарĕ. Укçана пуш-тă урлă йанă чух тăкак тухнăшăн леренех 32 пус тытса йулаççĕ. Ку переводный бланкă çинче паллă. Апла пулсан та Çемйонăв кунта татах çавăн чух-лĕ тытса йулат. Кăçал вăл мана çичĕ хуччен 2 тенкĕ те 24 пуслăх улталарĕ. Теприсене те çавăн пекех тăват, ытти çĕрте те чылай улталат. Хаçат-сене уйăхра сахалтан та 3—4 номĕр хăй çумне тытса йулат.

Ку ĕçшĕн Çемйонăв кăçал „Капкăна“ лекнĕ пул-сан, килес çул ăçта лекессине те пĕлетпĕр. Анчах халђ каламăпăр, пăшăрханĕ тата.

Владимир Дубровский.

## Ăнланма йăвăр

Ÿкерчĕкĕ „Крокодил“ журналтан.



**—Ку докладчикăн ăнланмала мар сăмах-сем пит нумай.**

**—Нта! Пĕлнĕ пулсан доклада итлеме ха-мăрăн библиотекăри мĕн пур словарсене пĕ-тĕмпех илсе килмелеччĕ.**

## Доклад хыççăн

Вулав çуртĕнче колхозниксемпе йединоличник-сем тата çамрăксен пухăвĕ. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ доклад тăват.

— Йулташсем! Пирĕн куљтурлă пурнассишĕн кĕрешмеле. Пире кашни киле хаçат-кĕнеке, кино, радио кирлĕ. Дайош куљтурлă пурăнасси,—тесе пĕтерчĕ вăл хăйĕн докладне.

— Ах, ытла та лайăх каларĕ вулав çурчĕн пуçлăхĕ.

Каç пулчĕ. Вăхăт шăпах 10 сехет çитнĕ. Шкул килкартинче хăмасенчен çапса тунă тула каймали патĕнче, йăванса выртат вулав çурчĕн пуçлăхĕ.

— Ех, куљтурлă пурнăç! Еп ĕçмесен кам ĕçес... Илтĕнет унăн сасси хушăран-хушă.

— Ах ытла та лайăх кĕртетçке пирĕн избач çĕнĕ йăласене!—шухăшласа иртсе карĕç кăнтăрла доклад итленĕ пĕр колхозникпа икĕ кино курса тавăрăнакан çамрăк.

Ан. Шаç-Ваç.

## Пĕр калаçу.

— Пĕлетĕн-и есĕ? Сана колхозниксем вăрçаççĕ. Пĕртте ку-раймаççĕ.

— Камсем? Кала йачĕсене, ашшĕ йачĕсене, хушамачĕсене Ман çине тапăнаççĕ-и? Вăрмар районĕнчи Кавал вулав çур-тĕнче тухакан çтена хаçатăн ответлă редакторĕ çине тапăнаç-çĕ-и? Самокритикăна кураймансем пуљ-ха. Еп весене вĕрен-тĕп. Халех сута парап.

— Чарăн-ха, чарăн ес! Кăвар пек хĕрсе карăн. Вĕри çапма пуçларĕ санран... Вĕсем вĕт сана тĕрĕссипех хĕртеççĕ. Ес избач вĕт-ха. Сан вуламали çуртра нихçан та пĕр хаçат-журнал çук теççĕ. Хăйне те курмастпăр, те пытанса пурăнат вăл, теççĕ.

— Е... Хаçат-журнал? Унта хаçат-журнал кайса пăрахмала-и? Тапак туртакансем калаçаççĕ пуљ-ха йăна, леш Кермун пеккисем. Вĕсем туртсах пĕтереççĕ хаçатсене. Килте перкет кассинчи пек тĕплĕ выртаççĕ вĕсем. Ха-ха-ха... „Хăйне те кураймастпăр“ теççĕ. Мĕншĕн курмала мана. Епĕ вĕт картин мар. Мана кĕнеке пек уçкаласа пăхма çук. Пустуй, ним сăлтавсăр ÿпкелешни ку.

— Кала-ха, Çтењки, мĕнле çак ес избач йатне илтнĕренпе колхоз ферминчи йокшир сысна пек мăнтăрлантăн, тата вĕçĕм-рен кулма вĕренсе кайнă? Пĕрмай кулсан ухмах теме пуç-лĕç,—терĕм те унтан уйăрăлса карăм.

Кепир.

# Музей

Ĕлĕкрех ăна „Хурал сарайĕ“ тесе чĕнеччĕç. Халĕ епĕ, тата хамăн йулташсем çав хурал сарайне „музей“ тесшĕн. Мĕншĕн тесен кунта питĕ авалхи „паха“ йапаласене тупма пулаť. Музейа курма пырас текенсем пулсан çак адрĕспа пырса курма пултаратăр: Ишлей районĕ, Ыхра-касси йалĕ. Йала пырсан музейа йалсоветĕнче ларакан çынсемпе каймала пулаť. Вĕсем ку музейăн „директăрĕсем“ пулса тăраççĕ. Çавăнпа вĕсемсĕр кайсан та майкилес çук. Теприсем çул инçе пирки пырса кураймăр. Сире кунтах пĕр суймасăр каласа парам музейра мĕн пуррине.

Урапа. Пушарсем тухсан шывлă пичкесем турттарса çÿремели хатĕр. Тĕсне пăхсанах питĕ авал туни палăраť. Шертешникĕ йăвăçран. Вырăнтан тапранманни пилĕк çул. Пайан-ыранах пĕтĕм шăмшакĕпе çĕр çумне лăпчăнса анса ĕмĕрлĕхех çухаласшăн.

Пичке. Шыв тытмали йапала. Анчах, ку музейри пичке виçĕ çул шывсăр аптраť. Никам та пĕр тумлам памаççĕ ăна. Кунĕн-çĕрĕн çăмăр пуласса кĕтет. Çăмăр пулсан музей çийĕ шăтăк пирки кăштах та пулин шыв кураканчĕ. „Пирĕншĕн ответлă çынсене ман пек шывсăр усрасчĕ“,—тет вăл йаланах хуйхăрса.

Пакур. Итлемен çынсене хăлхаран çаклатса туртма та йураť. Çакăнтан хăранă пирки пулас кунти пакурăн пĕр йуппине хуçса хунă.

Пуртă. Пĕр кĕтессине 1742 лартнă. Ку хăш çулта тунине пĕлтерет пулас. Виçĕ çул хайрсан та касакан пулас çук.

Витре. Утиђсырйо вађђи илсе кайманшăн куççӳђ йухтарсах куђанаť. Музейра урăх нимĕн те çук. Кусем те пĕрер штук, тĕслĕхрен кăна.

— Насус та çук-и?
— Çук çав.
— Апла сирĕн пуçлăхсем пушартан хăрамаççĕ?
— Çавна калатпăр ĕнтĕ.
— Ментен те пулин хăраççĕ-и?
— „Капкăна“ лекесрен хăраççĕ. Урăх нимĕнтен те хăрамаççĕ.

В. Дубровский.

## Перйĕв Микули

Йĕпреç районĕнчи „Пайгас“ колхоз председателĕ Перйĕв пайан правленивче лараť.

Çара уран, çара пуç. Тискерленсе тĕлсĕрленнĕ анкă-минкĕ ÿсĕр пуç...

— Кÿл лаша!—талхăраť коњух çинеле... Коњух хăвăрт, йăпăр-йапăр кÿлсе килет,—лаша хатĕр...

— Мĕн тăратăн ман умра!..

— Лаша хатĕр урамра...

Чупса тухрĕ хашкаса, тăвăлларĕ Лешкаса. Кутсăр-пуçсăр кустараť, йала тусан тустараť.

Акă! Акă! Шăмпăл-шампăл... кĕчĕ ÿкрĕ пĕвене. Çÿрет йарăнса пĕвере.

— Ну-и-ну!—тĕлĕнчĕ йал. Куçа хупмасан тем кăтартĕ ку кăçал.

Перйĕв Йĕпреç пасарне кайсан, çитес вырсарникун Хурамалта йармăнка пулас хыпара илтнĕччĕ. Çакă ыра хыпара Перйĕв чĕлхипе тутине çуласа илсех хăлхине ăшшăн чикнĕ.

Аратлă ăйăра тытса кÿлсе, çатан çинче хăйĕн чаплăхне пысăккăн палăртса çитсе кĕнĕ Перйĕв Хурамал йармăнкине.

Иармăнкаран вăл çĕр тĕмескисене тĕпретмесĕрех таврăнман. Тусаť тусан... шавлаť вăрман. Ах тĕнче!.. Акă иртет вăл пĕр хыр патĕнчен... Шалт! çакланчĕ кустăрма.—Ăçталаваскатăн тарма, хулиган?—терĕ пулас хыр. Çатан татăкăн-татăкăн саланса пĕтнĕ.

Аратлă ăйăра икĕ çĕртен суранлатнă. Чуптару вăхăчĕ. Аратлă ťыхасемшĕн çивĕч ыйту тăнă вăхăтра Перйĕв „Пайгас“ колхозĕнчи ăйăра катаччипе амантнă.

Тĕлĕнеççĕ колхоз членĕсем Перйĕвăн тĕнчи ирĕкленсе кайнинчен. Час тасалĕ-ши ку, тĕнчене тасамарлантаракан мыскарăçă пуçлăх вырăнĕнчен,—теççĕ.

В. Деферан.

## Колхозри такмаксенчен



Симĕс тутăр тăваткăл,
Унăн хыçне тĕрленĕ.
Манăн савни—ударник
Трактăриса вĕреннĕ.

Чĕкеç кайăк пулам-и,
Пÿрт çамкине ларам-и?
Колхоз ĕçне ĕçлесе
Еп ударник пулам-и?

Пурçăн кĕпе çĕлетрĕм
Октăбĕр кун тăхăнма.
Çирĕп пÿме ÿстертĕм
Трактăриса йуратма.

Улма йăвăç ÿстертĕм
Чечекшĕн мар, улмишĕн.
Еп савнийе йуратрăм
Ударникле ĕçĕшĕн.

# Качакапа купаста

Растратăсемшĕн, киревсĕр ĕçсене вăйаткăпа та ĕçкĕпе пытарса усранăшăн, Матшу йалпо правленине райсойуз салатса йамала тунă.




КАЧАКА: Мана купăста картине кĕрсессĕнех хăваласа кăларса йараççĕ. Хăйсен кооператив правленине кам мĕнлине пăхмасăрах ĕçлеме кӳртсе тултарнă.

# „Капкӑн“ почталйонӗ







Ереветлӗ, теветлӗ
Ӗҫӗ пытӑр ӗретлӗ.
Хӳре вӗҫне туй килнӗ.
Ӑна малтан кам пӗлнӗ.
Йакат Петӗр, пӑчӑнтӑ-ӑр!

Акӑ кунта еп килнӗ.
Есӗр «Капкӑн» кам илнӗ?
Унта кулӑ пуррине,
Хитре чӗкеҫ йуррине,
Халиччен есӗр илтнӗ тӑ-ӑр?

Илменнисем хаљ илӗр.
Илмесӗрех ан йулӑр.
Тухса кайап сыв пулӑр.
Вулӑр, кулӑр, ҫавӑнӑр.
Йакат Петӗр, пӑчӑнтӑ-ӑр!

**Кашни пуштӑ уйрӑмӗнчех ҫырӑнса илме пулат̆.**
**Хакӗ: 3 уйӑха—75 пус; 6 уйӑха 1 тенкӗ те 50 п.**
**ҫулталӑка — 3 тенкӗ.**

Секретарь и вып. редактор И. ИЛЛАРИОНОВ. Ответ. редактор ГУР. ТИТОВ.
Сдано в производ. 3—VIII—35 г. Подписано к печати 16—VIII—35 г. Уполномоч. Главлита № 530. Заказ № 1312
Формат бумаги 1/8 Об'ем 1,25 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 2300 экз. Издат. газ. „Канаш“.

Уйрăм № хакĕ 25 пус.

Генади Филипăв ÿкерчĕ



**Германири капиталиссем хушшинчи калаçусенчен.**

— Паçăр пĕр рабочи калаçса пынине илтрĕм Вăл калать: Ман, тет, ирхи апатран кăнтăрлахи апата çитиччен вăхăт пит час иртмест, тет: ирхи апат тенине епĕ ĕнер çирĕм, кăнтăрлахи апат тенине те ыран ĕнтĕ, те тепĕр кунне çимеле пулать, тесе пырать.

Кулаççĕ.

— Куласси пулĕ-ха. Ун пек калаçассинчен хăраса тăман рабочийе тытса тĕрмене ăсатмалаччĕ.